Приложение № 1
к приказу Минобразования Чувашии
от 06.09.2021 г. № 1126

**Республика шайӗнчи «Упрар тӑван чӗлхемӗре» оратор ӑсталӑхӗн конкурсӗн положенийӗ**

## 1. Пӗтӗмӗшле калани

1.1. Республика шайӗнчи оратор ӑсталӑхӗн конкурсне (малалла – конкурс) пуҫараканӗ – Чӑваш Республикин вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин министерстви, йӗркелекенӗ – Чӑваш Республикин вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин министерствин хушма професси вӗренӗвӗн «Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗ» бюджет учрежденийӗ (малалла – Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗ).

## 2. Тӗллевӗпе задачисем

2.1. Пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан организацисенче вӗренекен ачасене хӑйсем чӑваш пулнине кӑтартма, чӑваш чӗлхине тата лайӑхрах пӗлме пулӑшасси;

2.2. Яш ачасен хӑйсем мӗнле ҫӗр-шыв гражданинӗ пулнине ӑнланса илме май паракан тӗп компетенцисене аталантарасси (ик чӗлхелӗх, культурӑсен хушшинчи ҫыхӑнулӑха пӗлни, информаципе коммуникаци тата организаципе йӗркелӳ компетенцийӗ);

- шкул ачисен монолог тата диалог формипе чӑвашла калаҫас ӑсталӑха туптасси;
- халӑх умӗнче калаҫас хӑнӑхӑва аталантарасси;
- чӑваш чӗлхипе усӑ куракан талккӑша сарасси.

**Конкурса хутшӑнакансем**

Конкурса Чӑваш Республикинчи тата ун тулашӗнчи вӗренӳ организацийӗсен **5-6-мӗш класӗсенче** чӑваш чӗлхи вӗренекен ачасем хутшӑнаҫҫӗ.

**Конкурса хутшӑнмалли темӑсем**

- Тӑван чӗлхе – пуянлӑх.
- Чӑваш ҫӗрӗ, пурӑн ӗмӗр.
- Туслӑх ӗҫре палӑрать.
- Мӗн вӑл илемлӗх?

Конкурс чӑвашла иртет. Конкурса хутшӑнакансен чӑвашла анчах калаҫмалла.

Конкурс **икӗ** тапхӑрпа иртет:

1-МӖШ ТАПХӐР – муниципалитет тапхӑрӗ – районта е хулара 2021 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 6-мӗшӗнчен пуҫласа юпа уйӑхӗн 1-мӗшӗччен иртет.

Конкурсӑн пӗрремӗш тапхӑрне район е хула администрацийӗн вӗренӳ управленийӗсем ирттереҫҫӗ. Ку тапхӑра ирттерме кашни район е хула оргкомитет (малалла – вырӑнти оргкомитет) тӑвать. Вырӑнти оргкомитет жюри членӗсене палӑртать, вӗсен шутӗнче паллӑ поэтсем, писательсем тата культура ҫыннисем пулмалла.

Вырӑнти оргкомитет вӗренӳ организацийӗсене конкурс пуласси, хӑҫан тата ӑҫта иртесси ҫинчен ҫырупа пӗлтерет; конкурса иртерет, ҫӗнтерӳҫӗсемпе призӗрсене палӑртать.

Конкурсӑн муниципалитет тапхӑрне хутшӑнакан кашни ача конкурса хутшӑнни ҫинчен ӗнентерекен свидетельство илет, ҫӗнтерӳҫӗсемпе призӗрсем дипломсене тивӗҫеҫҫӗ.

Свидетельствӑсемпе дипломсене район е хула администрацийӗн вӗренӳ управленийӗсем параҫҫӗ.

***Педагогсене пӗлсе тӑма!*** *Конкурса хутшӑнмалли заявкӑна видеофайлпа пӗрле вырӑнти район е хула администрацийӗн вӗренӳ пайне ярса памалла. Заявкӑна вӗренӳ организацийӗн (шкулӑн) пуҫлӑхӗ алӑ пусать.*

2-МӖШ ТАПХӐР – республика тапхӑрӗ 2021 ҫулхи юпа уйӑхӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа юпа уйӑхӗн 20 мӗшӗччен кӗретсӗр (заочно) иртет.

Конкурсӑн 2-мӗш тапхӑрне хутшӑнма районта е хулара малти вырӑна тухнӑ 2 ачана ирӗк параҫҫӗ: 5-мӗш класра вӗренекен 1 ача, 6-мӗш класра вӗренекен 1 ача.
Шупашкар тата Ҫӗнӗ Шупашкар хулисенчен:
5-мӗш класра вӗренекен 3 ача, 6-мӗш класра вӗренекен 3 ача.

Районта е хулара малти вырӑна тухнӑ ачасен калаҫӑвне видео евӗр ӳкерсе илмелле. Ҫак видеофайла **yandex** е **mail** тӳлевсӗр усравлӑха (бесплатное облачное хранилище на yandex или mail) вырнаҫтармалла. Видеоматериала вырнаҫтарнӑ адреса заявкӑра палӑртса (1-мӗш хушӑм) **Чӑваш Республикин вӗренӳ институтне chrio18@rchuv.ru адреспа юпа уйӑхӗн 5-мӗшӗччен ҫак материалсене ярса памалла:**

1) Конкурсӑн республика тапхӑрне хутшӑнакансен списокӗ (**Wort** тата **pdf** форматсемпе);
2) Конкурс положенине тивӗҫтерекен видеоматериал;
3) Ача ҫинчен калакан даннӑйсемпе усӑ курма ирӗк паракан заявлени (согласие на обработку персональных данных) (2-мӗш хушӑм).

Видеокалаҫӑва смартфон, планшет, видеокамера, веб-камерӑллӑ компьютер е ноутбукпа усӑ курса ӳкерме юрать. Видеокалаҫӑва ачасен хӑйсен хушамачӗпе ятне, вӗренӳ организаци ятне, миҫемӗш класра вӗреннине каланинчен пуҫламалла.Унтан темӑна уҫса памалла.

Видеокалаҫу 3-5 минут тӑсӑлмалла. Видеофайл форматчӗ **mp4** е **flv** пулма пултарать.

Жюри ачасен ӗҫӗсене хакланӑ чухне ҫак енсене пӑхать:

1) проблемӑна ӑнланни (0–3 балл);
2) хӑй каланине ӗнентерме пултарни (0–3 балл);
3) автор хӑйӗн материалне туллин пӗлни тата каласа пама пултарни (0–3 балл);
4) пуплев тата грамматика нормисене пӑхӑнни (0–3 балл);
5) ӳт-пӗве хускалантарас культура (0–3 балл);
6) ыйтусене хуравлани (0–2 балл);
7) регламента пӑхӑнни (0–2 балл).

Жюри хаклав критерийӗсене шута илсе пӗтӗмлетӳ тӑвать, протокола ҫырать. Ӑна жюри председателӗ е ун ҫумӗ алӑ пусса ҫирӗплетет.

2-мӗш тапхӑра хутшӑнакансене пурне те Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн ӗнентерӳ хучӗпе (свидетельство, электрон форматпа), ҫӗнтерӳҫӗсене Чӑваш Республикин вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин министерствин дипломӗсемпе тивӗҫтереҫҫӗ. Конкурса ирттерекенсем конкурсантсем валли ятарлӑ парнесем палӑртма пултараҫҫӗ.

**2021 ҫулхи юпа уйӑхӗн 21-мӗшӗччен Чӑваш Республикин вӗренӳ институтӗнче конкурса пӗтӗмлетеҫҫӗ**, конкурс ҫинчен информаци институт сайтӗнче (www.chrio.cap.ru) пулать.

*Конкурса йĕркелекенсен адресĕ:*

428001 Шупашкар хули, М. Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ, 217-мĕш (регион аталанăвĕн центрĕ).

Телефонсем 88352 459996
E-mail: chrio6@cap.ru

Положенин 1-мĕш хушăмĕ

*Асăрхаттару: списока икĕ форматпа ярса пама ыйтатпăр:*

1) *текстпа (Microsoft Word)*
2) *скан-копипе.*

Республика шайĕнчи «Упрар тăван чĕлхемĕре» оратор ăсталăхĕн конкурсне хутшăнакансен списокĕ

| №№ | Конкурса хутшăнаканăн хушамачĕ, ячĕ (туллин) | Класс | Вĕренӳ организацийĕн чăвашла ячĕ | Вĕренӳ организацийĕн вырăсла ячĕ | Конкурса хатĕрлекен педагогăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ (туллин), должноçĕ | Педагогăн телефон номерĕ | e-mail | Видеоматериал вырнаçтарнă адрес |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | | | |

Район / хула администрацийĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ

_____________________ _____________________________

*ал пусни* *хушамат, ят, ашшĕ ячĕ*

Çырăва хатĕрлекенĕн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ
Телефон

Положенин 2-мӗш хушӑмӗ

**Согласие на обработку персональных данных**

Я,____________________________________________________________________________,
*(ФИО родителя или законного представителя)*
______________________________________________________________________________
______________________________________________________________________________
*(адрес)*
даю согласие на обработку персональных данных моего ребенка с передачей по общим сетям связи, в т.ч. Интернет
______________________________________________________________________________
*(фамилия, имя, отчество ребенка)*
______________________________________________________________________________
даю свое согласие Министерству образования и молодежной политики Чувашской Республики (далее – Оператор), на обработку своих персональных данных, на следующих условиях:

1. Оператор осуществляет обработку персональных данных Субъекта исключительно в целях организации и проведения республиканского конкурса ораторского мастерства обучающихся 5-6 классов «Упрар тӑван чӗлхемӗре» в 2021 году.

Перечень персональных данных, передаваемых Оператору на обработку:

- фамилия, имя, отчество;
- образовательная организация, где обучается ребенок;
- контактный телефон (дом., сотовый, рабочий);
- прочие.

2. Субъект дает согласие на обработку Оператором своих персональных данных, то есть совершение, в том числе, следующих действий: обработку (включая сбор, систематизацию, накопление, хранение, уточнение (обновление, изменение), использование, обезличивание, блокирование, уничтожение персональных данных), при этом общее описание вышеуказанных способов обработки данных приведено в Федеральном законе от 27.07.2006 № 152-ФЗ, а также на передачу такой информации третьим лицам, в случаях, установленных нормативными документами вышестоящих органов и законодательством.
3. Настоящее согласие действует бессрочно.
4. Настоящее согласие может быть отозвано Субъектом в любой момент по соглашению сторон. В случае неправомерного использования предоставленных данных соглашение отзывается письменным заявлением субъекта персональных данных.
5. Субъект по письменному запросу имеет право на получение информации, касающейся обработки его персональных данных (в соответствии с п.4 ст.14 Федерального закона от 27.06.2006 № 152-ФЗ).

«____»______________ 2021 г. ___________________ __________________
*Подпись* *ФИО*

Подтверждаю, что ознакомлен(а) с положениями Федерального закона от 27.07.2006 №152-ФЗ «О персональных данных», права и обязанности в области защиты персональных данных мне разъяснены.

«____»______________ 2021 г. ___________________ __________________

Приложение № 2 к приказу
Минобразования Чувашии
от 06.09.2021 г. № 1126

**Состав оргкомитета республиканского конкурса ораторского мастерства обучающихся 5-6 классов «Упрар тăван чĕлхемĕре»**

Лукшин Алексей Петрович, первый заместитель министра образования и молодежной политики Чувашской Республики, *председатель оргкомитета*

Петрова Светлана Владимировна, проректор БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии, *заместитель председателя оргкомитета*

Денисова Татьяна Васильевна, декан факультета чувашской и русской филологии Чувашского государственного педагогического университета им. И.Я. Яковлева, кандидат филологических наук, член жюри (по согласованию)

Иванова Алена Михайловна, декан факультета русской и чувашской филологии и журналистики ФГБОУ ВО «ЧГУ им. И.Н. Ульянова», доктор филологических наук (по согласованию)

Степанова Ирина Алексеевна, главный специалист-эксперт Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики

Ядранская Инесса Владимировна, директор центра регионального развития БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии